Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

68 (7599) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи сентябрĕн (авăн) 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Республикăра**

## Уралта чăваш чĕлхи янăрать

Çак кунсенче Екатеринбург хулинче Свердловск облаçĕнчи чăвашсен наципе культура автономийĕн çулталăкри пухăвĕ иртнĕ. Кунти диаспора – 20 пин çынна яхăн. Шупашкартан паллă скульптора П. Пунина тата Чăваш наци старейшинисен канашĕн председательне А. Кибеча чĕннĕ.

Тюменьрен те пысăк делегаци килсе çитнĕ. Отчетсемпе докладсем хыççăн делегатсем концертра пулнă, кайран вара спорт турнирĕсенче вăй виçнĕ. Юрăсем янăранă чухне Хусан консерваторийĕнчен вĕренсе тухнă Етĕрне районĕнчи Н. Мокеевапа тĕл пулма уйрăмах хавас пулнă. Вăл – Екатеринбургри оперăпа балет театрĕн ертсе пыракан солистки.

Ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ май хăнасем парнесем памасăр пултарайман: П. Пунин Никита Бичуринăн сĕтел çинчи автор бюстне, А. Кибеч писатель вара хăйĕн çĕнĕ кĕнекисене парнеленĕ.

**Ырă кăмăллăх**

## Кăнтăр Осетине пулăшу пырать

Кăнтăр Осети халăхне паракан пулăшу калăпăшĕ пирĕн районта кунран-кун пысăкланса пырать. Муркашсем тĕрлĕ енлĕ пулăшу параççĕ инкек тӳснĕ çынсене.

Район пуçлăхĕн çумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева каланă тăрăх, сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне пирĕн районта çак тĕллевпе пурĕ 85 пин тенкĕ пуçтарма пултарнă. Икĕ эрне каялла çак суммăн çуррине яхăн кăна пуçтараннăччĕ-ха. Апла пулсан Муркашсем хушшинче осетин халăхне инкекре пулăшас текенсем тата хушăннă. Ку пулăм район çыннисен ырă кăмăлне, вĕсем йывăрлăхра тепĕр çынна пулăшма хатĕррине кăтартса парать.

Гуманитари пулăшăвĕ шар курнă мирлĕ çынсем патне çитсех тăрать. Пулăшу пама ĕлкĕреймен çынсене вара çак ĕç малалла пыни çинчен аса илтеретпĕр.



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Валентина Владимировна Смирнова Муркашри вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентет. Вăл – районта хастар та пуçарулла учительсенчен пĕри. Питĕ пултарулла, хăйĕн ĕçне чунтан пурнăçласа пыракан вĕрентекен кăçал тивĕçлипех РФ Президенчĕн 100 пин тенкĕ хавхалантару укçине илме пултарчĕ.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкечĕкĕ.**

**РАЙОНТА: ĕнер, паян ыран**

## Общественноç вĕрентӳ ĕçне хутшăнать

Чăваш Республикинчи вĕрентӳ ĕçне аталантарассин Стратегине палăртнă чухне вĕрентӳ ĕçне общественноçа явăçтарассине палăртса хăварни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăннипех те ашшĕ-амăшĕсем, ĕç паракансем вĕрентӳ услугисен заказчикĕсем пулса тăраççĕ, умри проблемăсене те вĕсен шкулсемпе пĕрле татса памалла.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ Николай Григорьевич Ванеркин 5 çул ĕнтĕ Калайкасси шкулĕнчи попечительсен канашне ертсе пырать. 2006 çултан вара вăл – район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн муниципаллă попечительсен канашĕн членĕ.

Опыт кăтартса панă тăрăх, шкулпа обществăн нумай ыйтăвĕсене пĕрлехи вăйпа татса пама çăмăлрах. Калайкасси шкулĕпе попечительсен канашĕ пĕрле шкула 2006–2010 çулсенче аталантармалли программăна туса хатĕрленĕ. Халĕ вара ăна пурнăçа кĕртессипе ĕçлеççĕ. Пĕрлехи вăйпа вĕренӳре ăнăçлă ĕлкĕрсе пыракан пултаруллă ачасене хавхалантарса пыма майсем тупаççĕ, вĕрентӳ учрежденийĕн пурлăхпа техника базине пуянлатаççĕ. Шкулта попечительсен канашĕ ĕçленĕ тапхăрта шкулти спорт залĕнче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ, спорт инвентарĕ туяннă. Ачасен сывлăхне çирĕплетессин тата сывă пурнăç йĕркине тытса пырассин ыйтăвĕсене пысăк вырăна хураççĕ. Тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсем тăтăшах ирттереççĕ. Вĕсем ачасемшĕн кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕсемшĕн, учительсемшĕн те пысăк уяв пулса тăраççĕ. Ку ăмăртусен призерĕсем хаклă парнесене тивĕçеççĕ.

Районта шкултан вĕренсе тухакансен патшалăх аттестацине ирттерессин обществăлла тĕрĕслевĕн системине йĕркеленĕ. Пĕрлехи патшалăх экзаменне ирттернĕ чухне 11 классенче 2006–2007 вĕренӳ çулĕсенче обществăлла тĕрĕслевçĕсем пулнă.

## Машинăпа трактор паркĕ пуянланать

Районти ял хуçалăх предприятийĕсен машинăпа трактор паркĕ пуянланса пырать. Кăçалхи 8 уйăхра ял хуçалăх предприятийĕсем 40 çĕнĕ ял хуçалăх техники туяннă. Ку вăл 32 миллион тенкĕлĕх ытла.

Çăмăллатнă кредитсемпе 24 техника хатĕрĕ 19450,3 пин тенкĕлĕх туяннă, лизингпа – 4 техника хатĕрĕ 7581 пин тенкĕлĕх, хăйсен укçи-тенкипе – 12 техника хатĕрĕ 5819 пин тенкĕлĕх.

## Юнкă ял тăрăхĕнче пулнă

Çак кунсенче Раççей Пенси фончĕн районти управленийĕн тата районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ĕçченĕсем Юнкă ял тăрăхĕнчи ĕçченсемпе тĕл пулнă. 3 тĕл пулу иртнĕ. Кайран Юнкăри Культура çуртĕнче Юнкă, Юнкăпуç, Çармăçкасси ялĕсенче пурăнакансем пуханнă. Унтан информаци ушкăнĕ Кăпас ялĕнче пурăнакансемпе вырăнти клубра тĕл пулса калаçнă. 15 сехетре вара тĕл пулу Канаш выççăлкки ялĕнче урамрах иртнĕ.

Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ Е.М. Александрова пухăннисене пенсисен тĕсĕсем, компенсацисен тӳлевĕсем, ача амăшĕсен капиталĕ пирки каласа панă. Социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова вара инвалидсене, ветерансене, донорсене тата ытти категорисене кĕрекен çынсене коммуналлă услугăсемшĕн çăмăллăхсем памалли йĕркесемпе паллаштарнă. Кунпа пĕрлех вăл ачасене пăхса пурăннăшăн паракан пособисем, ачасем çуралсан паракан, çие юлнă тата ачисене тăрантарса пурăнакан амăшĕсене паракан пособисене тӳлессин ыйтăвĕсем çинче те чарăнса тăнă. Калаçу вăхăтĕнче пурин пирки те аса илнĕ: субсидисем пирки те, компенсацисем пирки те, тăлăх ачасене пăхса пурăнасси пирки те. Тĕл пулăва районти ветерансен канашĕн председателĕ М.В. Виноградова та хутшăннă.

Пур тĕл пулусенче те Ю.Н. Жуков ертсе пыракан агитбригада коллективĕ пухăннисене хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарнă. Вĕсенче чăваш халăх юррисемпе пĕрлех Ю. Жуков юррисем те янăранă. Агитбригада хăйĕн пултарулăхне кăтартнипе пурте кăмăллă юлнă.

Тĕл пулусем вăхăтĕнчех 2009 çул валли социаллă пакетсемпе усă курассипе гражданСенчен заявленисем йышăнассине те йĕркеленĕ.

**Вырма – 2008**

## Кĕрхи ĕçсем тивĕçлипе ыйтаççĕ



Раççейре «Агропромышленноçа аталантарасси» наци проекчĕ ĕçлеме тытăнсан çĕр-шыв ял хуçалăхĕ çинчен маннă текенсен чĕлхисем хупланчĕç: ĕçле паян, малашлăха пăхса çĕннине алла ил, ĕçе инвесторсене явăçтар – çаксене тата ыттисене те çул уçма çĕр-шыв алă тăсса пачĕ. Пурнăçпа, çĕр-шыв аталанăвĕпе тан пыракансен экономики çĕнĕ шайпа çĕкленнинчен тĕлĕнме кирлех-и? Хуравĕ пĕрре: çĕннине алла илекенĕн паянхи ĕç кăтартăвĕсене тата малашлăхне урăхла курайма стăн та. Вĕсен никĕсĕнче ӳсĕм паракан технологисемпе тата çĕнĕ техникăпа тухăçлă ĕçлени тăрать.

Кăçалхи çанталăк условийĕсене пăхсан ял хуçалăх культурисен тухăçĕ пысăк пуласси пирки никамăн та иккĕленӳ пулмарĕ. Анчах ăна пухса кĕртмелле-çке! Çурла уйăхĕ çитсен районти ытти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрле «Передовик» ял хуçалăх производство кооперативĕ те хирти çăкăра кĕлете кĕртессипе ĕçе кӳлĕнчĕ.

Москакассисен кăçалхи вырмара 514 гектар çинчи тырăпулăна вырса кĕртмелле пулчĕ. Ял-йыш вырма ĕçне пĕрле кӳлĕннĕрен паян хирте тырă-пулă юлманпа пĕрех. Художество пултарулăхĕпе информаци ушкăнĕ те вырмара хыçалти рете юлмарĕ. Н. Кондукторова купăççă çак йывăр вăхăтра та алăран хут купăс вĕçертмерĕ **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**, вырмара ĕçлекенсене илемлĕ кĕвĕпе, мал туртăмлă юрăпа хастартарах ĕçлеме хавхалантарса пычĕ. Информаци ушкăнĕнче вара Москакассинчи тĕслĕх ял библиотекин библиотекарĕ Рената Сибякова **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)** тăрăшуллă пулчĕ. Вăл кулленех çĕнĕ хаçат-журналсемпе йĕтем çине çитсе тăчĕ.

Пĕрлехи тăрăшулăх «Передовик» хуçалăха иртнĕ тунти кун тĕлне вырмана вĕçлеме май пачĕ. Умра – ытти кĕрхи ĕçсем тата техникăна управа лартасси.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Юбилей**



### Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, ăшă кăмăллă аннене, хунямана, кукамая – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Маргарита Самуиловна ЕВСТАФЬЕВАНА** сентябрĕн 10-мĕшĕнче 50 çул тултарнă ятпа ăшă та çепĕç туйăмсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тулли телей, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Эс пурри пирĕншĕн – тулли пурнăç, савăнăç, пуянлăх. Çăкăр-тăвар сĕтел çинчен ан татăлтăр, укçа-тенкĕ çитсе пытăр, ачусемпе мăнукусем савăнтарччăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, тăхлачисемпе хăтисем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

**Çырăнтару – 2009**

## Çитес çул валли çырăнтараççĕ

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.***

***Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!***

**Райхаçат редакцийĕ.**

СБЕРБАНК РОССИИ
Основан в 1841 году
Кредиты для населения

**Автопробег автомобилей KIA в Моргаушах!!!**

**16 сентября 2008 года** у здания Моргаушского отделения №7034 Сбербанка России (с.Моргауши, ул.Ленина, д.34) состоится тест-драйв совместно с автосалоном ООО «ТрансТехСервис»/ООО «ТрансАвто».

В рамках автопробега приедет колонна автомобилей: **KIA SPECTRA, KIA CERATO, KIA SPORTAGE**




Все желающие смогут поучаствовать в **тест-драйвах** (услуга бесплатная), получить консультации по вопросам покупки автомобилей по программе автокредитования Сбербанка России и в рамках реализации Государственной программы развития сельского хозяйства на 2008-2012 годы, оформить заявку на получение кредита и покупку автомобилей.

Подробности по телефону: (83541) 2-23-46.

Телефон горячей линии ООО «ТрансТехСервис»: (8352) 24-02-02.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**